# СĂВĂ-ЮРĂ ĂСТИ

1947 çул. Шупашкарта çамрăк писательсен республикăри канашлăвĕ пулса иртрĕ. Ун чухне эпĕ Радиоинформаци комитетĕнче литературăпа драма передачисен редакторĕнче ĕçлеттĕм. Ман канашлăва хутшăннă çамрăк литераторсен пултарулăхĕ çинчен ятарласа передача йĕркелемелле пулчĕ. Çак передачăна Алексей Воробьев çамрăк поэт та хутшăнчĕ. Вăл микрофон умĕнче хăйĕн вăрçă çинчен çырнă çĕнĕ сăввисене вуласа пачĕ. Передача хыççăн эпир унпа чылайччен калаçса лартăмăр.

– Пирĕн пурнăç çулĕ çăмăлах пулмарĕ. Ĕçĕ нумай. Сăвă та çырас пулать, – терĕ вăл.

Алексей Воробьев сăввисем час-часах республикăри журналсенче курăна пуçларĕç. Тӳрех калатăп: эпĕ унăн произведенийĕсене юратса вулаттăм. Мана поэт хăйĕн пысăк ăсталăхĕпе çырнă сăввисенче çĕнĕ шухăшсем калама, çĕнĕ сăнарсем, ӳкерчĕксем тума тăрăшни савăнтаратчĕ. Воробьев хăй пек, Воробьев пек, çыратчĕ.

Эпĕ Алексей Александрович пултарулăхĕнчен яланах тĕлĕнеттĕм. Пĕр çулхине мана Атăл леш енчи Кăкшăмра, писательсен çуртĕнче, унпа пĕрле, пĕр пӳлĕмре пурăнма тĕл килчĕ. Кăкшăма пĕр чăпта çапакан ватă мучи канма пынăччĕ. Вăл питĕ калаçма, шӳт тума юратакан çынччĕ. Унпа эпир час-часах тĕл пулаттăмăр, калаçаттăмăр, шӳт туса илеттĕмĕр.

Пĕррехинче мана Алексей Александрович: «Акă, ăçта вăл, хальхи Кĕлпук мучи. Ĕçчен, сăпай, шӳт тума та пултарать... Ун çинчен сăвă çырас шухăшăм пур», – терĕ. Поэт çĕрĕпе тертленчĕ, çĕрĕпе çырчĕ. Тепĕр кунне вăл мана, Николай Илпек, Николай Айзман писательсене, хайхи мучие хăй патне чĕнсе илчĕ те тин çеç çырнă çĕнĕ сăввине вуласа пачĕ. Эпир пурте итлесе лартăмăр. Мучи ниçта кайса кĕреймест, савăннă. «Ак, тамаша. Кунта сăмах ман çинчен пырать-çке. Мĕнле çырма пултарнă. Тĕлĕнмелле», – тесе ларать.

Поэт хăй курнă, хăй пĕлнĕ, хăй тӳссе ирттернĕ япаласем çинчен çырма юрататчĕ. Унăн пултарулăхĕнче уйрăмах колхозлă ялпа унăн çыннисем çинчен, Тăван уй-хир, ырă та илемлĕ çутçанталăк çинчен çырнă сăвăсем тĕп вырăн йышăнаççĕ. Алексей Александрович хăйĕн 1958 çулта тухнă пĕрремĕш кĕнекине те «Хирти калаçу» тесе ят пачĕ. Çавăн пекех поэт пирĕн Тăван çĕршывăмăр иртнĕ вăрçăра тӳссе ирттернĕ йывăрлăхсем çинчен, совет халăхĕн паттăрлăхĕпе хăюлăхĕ çинчен, мирлĕ пурнăç, çамрăксен ĕçĕ-хĕлĕ, туслăхпа юлташлăх çинчен нумай çырса хăварчĕ.

*Алексей Александрович Воробьев пĕтĕм ăсхакăлне Тăван çĕршывăннемĕршĕн, халăх телейĕшĕн пачĕ.*

**Василий ДАВЫДОВ-АНАТРИ.**

Алексей Воробьев сăпай çынччĕ, нихçан та мухтанмастчĕ. Пĕр çулхине вăл çырнă произведенисене Чăваш комсомолĕн Çеçпĕл Мишши ячĕпе хисепленекен премине илме тăратрĕç. Ку ыйтăва хамăр писательсен Союз правленийĕн ларăвĕнче сӳтсе яврĕç. Ун чухне Воробьев правлени членĕччĕ. Те çавна пула:

– Кунта мана ларни килĕшмест. Шухăшлăр, калаçăр, – терĕ те правлени ларăвĕнчен тухса кайма ирĕк илчĕ.

Нумай та вăхăт иртмерĕ, эпир ВЛКСМ обкомĕ Воробьев поэта комсомол премине пама йышăннине пĕлтĕмĕр.

– Комсомол премийĕ мана татах та лайăхрах ĕçлеме, вулакансен кăмăлне çырлахтаракан сăвăсем çырма хавхалантарать. Хальхи çамрăксен вĕресе тăракан хĕрӳ пурнăçĕ çинчен пысăкрах произведенисем çырас шухăшăм пур, – терĕ ун чухне Алексей Александрович. Часах вăл пионерсемпе шкул ачисене «Хрисан» поэма парнелерĕ. Ку поэмăра автор Хрисан пионерăн паттăр ĕçне, ырă сăнарне ĕненмелле, ăста çырса кăтартнă. Воробьев общество ĕçне активлă хутшăнакан поэтсенчен пĕри пулнă. Чăваш писателĕсен Союзĕ ирттерекен пĕр пысăк ĕç те унсăр иртмен темелле. Мана хама та унпа час-часах районсенче, хамăрпа тăванла республикăсенче, облаçсенче пулма, чăваш литературипе искусствин кунĕсене хутшăнма тӳр килнĕ.

Лайăх астăватăп: Владимир Ильич Ленин çуралнăранпа 100 çул тултарнă кунсенче Ульяновскра пирĕн республика делегацийĕ, культура деятелĕсен – писательсен, композиторсен, артистсен пысăк ушкăнĕ пулчĕ. Кунта облаçри хуласемпе ялсенче, литературăпа музыка кунĕсем иртрĕç. Ульяновска писательсенчен Петĕр Хусанкай, Алексей Воробьев, Георгий Ефимов, эпĕ кайнăччĕ.

Ун чухне Ульяновскра Ленин мемориалне тăватчĕç. Çак пысăк стройкăра вырăссемпе ытти тăванла халăхсен ывăл-хĕрĕсемпе пĕрле чăваш çамрăкĕсем те ĕçлетчĕç. Пĕр кунхине эпир, чăваш писателĕсем, кунти строительсемпе тĕлпулу ирттертĕмĕр. Çавăн чух пирĕн тусăмăр Алексей Воробьев та хăйĕн Ленин, Тăван çĕршыв, совет çамрăкĕсем çинчен çырнă сăввисене пысăк хавхаланупа вуларĕ.

Пĕррехинче хамăр делегаци руководителĕ, КПСС обкомĕн секретарĕ Илья Павлович Прокопьев, пирĕнпе, писательсемпе, композиторсемпе, артистсемпе

калаçнă чухне: – Ленин çуралнă хуламăр Ульяновск çинчен чуна çěклекен сăвă, юрă çырасчě, – терě. Çак ырă сěнěве кăмăлласа йышăнтăмăр. Аристарх Орлов-Шуçăм композитор Алексей Воробьевпа пěрле Ульяновска халалласа юрă çырчěç. Петěр Хусанкай та «Чěмпěр» ятлă сăвă çырчě. Ăна поэт чăваш литературипе музыкин кунěсем вěçленнě кун Ульяновскра театрта вуласа пачě. Ун чухнех Аристарх Орлов-Шуçăм Алексей Воробьевпа çырнă çěнě юрри те çěкленўллěн, илемлěн янăрарě. Эпир каярахпа час-часах хамăр Ульяновскра пулни çинчен аса илсе калаçаттăмăр.

Алексей Воробьевпа çул çўреме, вулакансемпе тěлпулусем ирттерме çав тери кăмăллăччě. Поэт хăй çырнă сăвăсене чăвашла та, вырăсла та ăста вулатчě. Пěррехинче эпир унпа Муркаш районěнчи «Передовик» совхозра литература касě ирттертěмěр. Совхозри культура çурчěн сцени çине, вулакансем умне, Воробьев тухрě. Вăл кěскен хăй ěçě-хěлě çинчен каласа пачě, унтан сăввисене вулама пуçларě. Культура çуртěнче шăп, пěр сас-чў те çук. Кунта поэтăн «Ача утма пуçлани», «Сар çу», «Çăкăр»... сăввисем янăрарěç. Вěсене литература касне пынă çынсем кăмăлласа итлерěç.

Литература касě вěçленсен, поэта совхозри каччăсемпе хěрсем хупăрласа илчěç.

– Пире сирěн «Çăкăр», «Сухан çинчен» сăввăрсем çав тери килěшрěç. Вěсене ăçтан тупса вулама пулать? – тесе ыйтаççě.

– Сире сăввăмсене шыраттарса çўрес мар. Акă, аллăмра эпě çырнă кěнеке. Ăна асăнмалăх сире парса хăварам. Унта «Çăкăр», «Сухан çинчен» тата ытти сăвăсем те пур, – терě те Алексей Александрович вěсене хăйěн «Кăнтăрла» ятлă кěнекине парнелерě.

Çамрăксем ăна ыйту хыççăн ыйту параççě.

– Эпир «Хурлăхан» юрра çав тери кăмăллатпăр. Кам çырнă-ши ун сăввине? – тесе ыйтаççě вěсем. Эпě, поэтпа çамрăксем калаçнине итлесе тăраканскер, чăтаймарăм:

– Ун авторě Алексей Воробьев поэт. Вăл акă кунта, сирěн умра тăрать. Вăл ăна Юрий Кудаков композиторпа çырчě. Чăнах та, юрри вара питех те илемлěн янăрать, чуна ăшăтса ярать, – тесе хутăм.

– Эсир ăна хăвăр юрлатăр-и? – тесе ыйтать Воробьев.

– Юрламасăр, «Хурлăхан» вăл пирěн юратнă юрă, – терěç те çамрăксем ăна шăрантарма та пуçларěç. Поэт чăтаймарě, юрласа ячě.



*Ўкерчěкре (сулахайран сылтăмалла): С. Михалков, В. Краснов-Асли, С. Ислюков, В. Давыдов-Анатри, А. Воробьев (1971 ç.)*

Алексей Воробьев юлашки çулсенче чăваш писателěсен Союзěнче литература консультантěнче ěçлерě. Çав вăхăтрах вăл çамрăк литераторсемпе ěçлекен совет секретарěччě. Тен, çавăнпа-и, ун патěнче яланах çамрăк писательсене курма пулатчě. Поэт Союзри творчество секцийěсен ěçне активлă хутшăнатчě.

Алексей Александрович пурнăçри туслăха хисеплерě. Уйрăмах вăл вырăс поэчěсемпе Владимир Костровпа, Виктор Кочетковпа, чăвашла пěлекен мари поэчěпе Геннадий Матюковскипе тус-юлташла килěштерсе пурăнатчě. Пěррехинче ман патăмра Владимир Костров хăнара пулчě. Ун чухне вăл мана Воробьев пултарулăхě çинчен хавхаланса кала-кала пачě.

– Алексей Воробьев – сăвă ăсти. Вăл çырнă чылай сăвăсене, кăмăл туртнăран, эпě вырăсла куçартăм, – терě Владимир Костров поэт.

Алексей Александрович Воробьев пěтěм ăс-хакăлне Тăван çěршыв-аннемěршěн, халăх телейěшěн пачě.

«Час-час эп шухăша путатăп.
Илтетěп, тивěçěм чěнет:
Этем телейěшěн вута та
Кěмешкěн хатěр пул, поэт!», –

тетчě вăл.

Поэтăн уçăмлă сасси çěршыв тăрăх янăраса кайрě. Вăл çырнă сăвă-юрра ытти тăванла халăхсен ывăлхěрěсем те юратса вулаççě.

1997 ç.